# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ · 1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

58 (8724) № * Юнкун, 2019 ҫулхи утă (июль) уйăхĕн 31-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

# Агрегатсем – кĕрхи тулă пуссинче



*Хуҫалăхсенче – хĕрӳ ĕҫ тапхăрĕ. Ытларах пĕрлешӳллĕ хуҫалăхпа хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче ҫак вăхăта нумай ҫул ӳсекен курăксене ҫулса тирпейлеме ĕлкĕрчĕҫ ĕнтĕ. Пĕр ҫул ӳсекен курăксене ҫулаҫҫĕ, утă типĕтеҫҫĕ, сенаж-силос хываҫҫĕ. Черетре вара тата яваплăрах ĕҫ ҫи – вырма.*

*«Свобода» пĕрлешӳллĕ хуҫалăхра та паян 330 тонна ытла утă типĕтсе янтăлама ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Сенаж хывассипе ĕҫсем малалла пыраҫҫĕ. Ăна та 2500 тонна яхăн хывма ĕлкĕрнĕ. Иртнĕ эрне вĕҫĕнче вара «хир карапĕсем» Кашмаш ялĕ патĕнчи кĕрхи тулă пуссине тухрĕҫ. Вăштăр ҫилпе хумханакан тулă пуссинче пĕрремĕш ҫаврăмсем турĕҫ, йĕтем ҫине ҫĕнĕ тырă килме тытăнчĕ.*

*Хуҫалăх ертӳҫи Леонид Петров вырма ĕҫĕсем пуҫланнипе кăмăллă. Ҫанталăкне кăҫал хурламаллах мар. Ҫĕр ĕҫченне мĕнпур ĕҫе туса ирттерме ку таранччен чăрмав кăларса тăратмарĕ. Тыр-пул тухăҫĕ япăх пулма кирлĕ мар. Вырмана хутшăнакан техника шанчăклă, кивĕ мар. Ҫитменнине тата комбайнсен штурвалĕ умне ларакансем те – вырăнти ҫамрăксем, апла пулин те хĕрӳ ĕҫ ҫире пиҫĕхсе хăйсене лайăх енчен кăтартма пултарнăскерсем.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкре: (сулахайран сылтăмалла): ĕҫ ҫи паттăрĕсем Владимир Шапошников комбайнер тата комбайнер пулăшаканĕ пулса тăрăшакансем Сергей Ишаковпа Алексей Ярутков.*

(Вĕҫĕ 3-мĕш стр.).

**Ҫĕнĕлĕхсем**

# Мĕн кĕтет пире августра?

### Пенси ӳсет

Августăн 1-мĕшĕнчен ĕҫлекен пенсионерсен пенсийĕ 244 тенкĕ таран ӳсет. Ку ӳсĕме 2016 ҫултан тытăнса индексацилемен. Пухнă пенси балĕсене шута илсе пенсие ҫĕнĕрен шутласа параҫҫĕ. Хальхи вăхăтра пенсие ҫĕнĕрен шутласа палăртма 3 балл шута илеҫҫĕ. Хушма балсене ҫитес ҫул шута илме тытăнма палăртаҫҫĕ.

### Нотариус кирлĕ мар

Августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пĕрлехи харпăрлăх хуҫисем хăйсен харпăрлăхĕ тĕлĕшпе хăш-пĕр ĕҫсене нотариус ҫирĕплетнисĕрех – хăйсем ҫырса кăна туса ирттерме те пултараҫҫĕ. Калăпăр, пурăнмалли ҫуртйĕре сутнă май, пай ҫĕрне урăх харпăрҫа парассипе.

### Патшалăх пошлини пулмасть

Августран пуҫласа, ипотека каникулне илнĕ май, куҫман пурлăхан пĕрлехи патшалăх реестрне улшăну кĕртнĕ чухне патшалăх пошлини тӳлемелле пулмасть. Халĕ вăл 200 тенкĕпе танлашать.

### Ҫурт-йĕре страхласси

Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелли квитанцире ҫĕнĕ пункт пулать. Ку вăл – куҫман пурлăха чрезвычайлă лару-тăруран страхласси. Саккун августăн 4-мĕшĕнчен вăйра пулать. Ҫапах та пурăнмалли ҫурт-йĕре страхласси кашнин хăйĕн ирĕкĕ пулса тăрать. Страхлав рискĕсен перечене кашни регион хăй ҫирĕплетме пултарать: сут ҫанталăк инкекĕсем, техногенлă катастрофăсем, теракстем т. ыт. те.

### Регистраци ансатланать

Августăн 4-мĕшĕнчен тытăнса туяннă автомашинăна ăна туса кăларакан урлă тата официаллă дилерăн салонĕнче регистрацилеме май пулать. Ҫакă ГИБДД-на кайса вăхăт ҫухатассинчен хăтарать. Ҫавăн пекех автомашинăсемпе мотоциклсене нумай функциллĕ центрсенче пĕр чӳрече мелĕпе регистрацилессипе те ҫĕнĕлĕх пурнăҫа кĕртме хатĕрленеҫҫĕ.

### Номер знакĕсене хатĕрлесси

Августăн 4-мĕшĕнчен тытăнса ҫĕнĕ автомобильсем валли номер знакĕсем ҫинчи сас паллисемпе цифрăсене мĕнле вырнаҫтарассине ГИБДД-ра палăртĕҫ, номер знакĕсене вара аккредитациленĕ харпăр хăй компанийĕсем туса кăларма пуҫăнĕҫ. Патшалăх номерĕн хакĕ улшăнмалла мар. НДС-а шута илсен, вăл автомашинăсем валли 2 пин тенкĕрен ытла пулмĕ.

### Багаж илсе ҫӳресси

Августăн 19-мĕшĕнчен тытăнса багаж тата алă ҫĕклемĕ (улма-ҫырла тата чечек) илсе ҫӳрессипе улшăнусем пулаҫҫĕ. Малашне ҫĕршыва харпăр хăйĕн улма-ҫырла 5 килограммран ытла тата чечек 3 ҫыхăран ытла илсе кĕртме юрамасть. Ытларах илсе кĕртме ятарлă документ кирлĕ пулать. Ҫакă пассажирсене кăна мар, посылкăсене те пырса тивет.

### Алкоголе лайăххах тĕрĕслĕҫ

Августăн 21-мĕшĕнчен тытăнса алкоголь продукцийĕ упранакан складсем тĕлĕшпе требованисем ҫирĕпленеҫҫĕ. Кун пек пӳлĕмсене служба тата хушма пӳлĕмсенчен капиталлă е вăхăтлăх стенапа уйăрмалла, шалта сутă пулмалла, сывлăш температурине тата нӳрĕклĕх шайне виҫекен приборсем вырнаҫтармалла. Ҫакă продукци туса кăларакансене те, курттăммăн сутă тăвакансене те пырса тивет.

**Массăллă информаци хатĕрĕсен материалĕсем тăрăх.**

**Республикăра**

## 10600 ҫамрăка – тӳлевсĕр пĕлӳ

Тунтикун ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Правительство ҫуртĕнче ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсемпе тата федераци службисен регионти уйрăмĕсен ертӳҫисемпе, муниципалитет пуҫлăхĕсемпе кашни эрнере пулакан ĕҫлĕ планерка ирттернĕ.

2019–2020 ҫулсенче Чăваш Енре професси пĕлĕвĕ паракан учреждениесенче 10,6 пин бюджет вырăнĕ йышăнса хăварнă. Аслă шкулсене пурĕ 3 171 абитуриент тӳлевсĕр вĕренме кĕме пултарать.

## Виҫĕ медаль ҫĕнсе илнĕ

Утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче Правительство ҫуртĕнче кашни эрнере пулакан ĕҫлĕ планерка иртнĕ. Кун йĕркине кĕртнĕ тĕп ыйтусенчен пĕри – Шупашкарта ҫăмăл атлетикăпа 100-мĕш чемпионат иртнине тĕплĕн сӳтсе явасси.

Чăваш Республикин спорт министрĕн тивĕҫĕсене пурнăҫлакан Эльвира Матренина хăйĕн сăмахĕнче спорт ăмăртăвĕсенче пĕтĕмпе Раҫҫей Федерацийĕн 72 субъекчĕнчен 733 спортсмен хутшăннине хыпарланă.

Чăваш Республикине пĕтĕмпе ҫăмăл атлетика енĕпе 22 спортсмен хӳтĕленĕ. Ылтăн медале Анжелика Сидорова ҫĕнсе илнĕ. Кĕмĕл медале – Вера Васильева (Купăрля ялĕнче ҫуралнă), бронза медале Марина Максимова тивĕҫнĕ.

**Районта**

## Спорт фестивалĕ пулать

Августăн 10-мĕшĕ – Физкультурник кунĕ. Физкультурник кунне халалласа район администрацийĕн йышăнăвĕпе августăн 9-мĕшĕнче Муркашра физкультурăпа спорт фестивальне ирттерме палăртнă. Массăллă ҫак мероприятие хаваслă та сывлăхшăн усăллă ирттерессипе ҫыхăннă ыйтусене июлĕн 30-мĕшĕнче йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче сӳтсе яврĕҫ.

Фестиваль шайĕнче ҫав кун районти ĕҫ ҫыннисен спартакиадин ăмăртăвĕсем иртеҫҫĕ. Командăра 8 ҫын пулмалла: 4 хĕрарăмпа 4 арҫын. Ăмăртусем тĕрлĕ дистанцие чупассипе те, турник ҫинче алă вăйĕпе туртăнассипе те, алă вăйĕпе урайĕнчен тĕртĕнессипе те, вырăнтан вăрăмăшне сикессипе те, спорт снарядне ывăтассипе те, шыраа ишессипе т. ыт. те пулаҫҫĕ. Ҫĕнтерӳҫĕсене уйрăм участниксем хушшинче те, ҫавăн пекех командăсем хушшинче те палăртаҫҫĕ.

## Граждансене йышăнаҫҫĕ

**Шупашкарти сут ҫанталăк хӳтĕлев прокуратури Чăваш Республикинчи ҫын прависен уполномоченнăйĕпе пĕрле йышăну ирттерет.**

**Йышăну августăн 1-мĕшĕнче 11–12 сехетсенче Муркаш район администрацийĕн 308 пӳлĕмĕнче (ларусен пĕчĕк залĕнче) иртет.**

**Саламлатпăр**

Юратнă мăшăра, аттене, хăтана, кукаçие – Уйкас Турай ялĕнче пурăнакан **Владимир Владиленович ИВАНОВА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн



саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу такăр та вăрăм, телейлĕ килтĕр. Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсем, Ваня мăнукĕ, хăтипе тăхлачи.**

Пăсăрман ялĕнче пурăнакан пирĕн юратнă тăванăмăр – **Калерия Григорьевна ФЕДОРОВА** хăйĕн 80 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир сана çак паллă кунпа чĕререн тухакан чи ăшă туйăмпа саламлатпăр.



Ĕмĕрӳ юханшыв пек вăрăм, сывлăху юман пек çирĕп, утас çулу такăр, кăмăлу ăшă пултăр. Хуйхă-суйхă санран аякран ирттĕр. Умра яланах çутă та хĕвеллĕ кунсем пулччăр. Аки! Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Санăн ăшă кăмăлу пурин валли те çиттĕр. Турри яланах хăват парса тăтăр малалла пурăнма.

**Саламлаканĕсем: пиччӳн ачисем çемйисемпе, Григорьевсен 4 çемйи, Углевсем, Никитинсем.**

Мы поздравляем нашу замечательную, добрую, любимую сестру, тетю – **Зинаиду Алексеевну МИХАЙЛОВУ** с 65-летним юбилеем.



Желаем крепкого здоровья, счастья, любви в семье. Вы настоящая душа семьи, любимая мама и жена, золотая бабушка, добрая сестра и тетя. Мы все очень любим и ценим Вас. Пусть все неприятности обходят ваш дом стороной. Оставайся такой же красивой, мудрой, доброй и открытой.

**С поздравлением: Углевы, Блиновы.**

**«Дача амнистийĕ»**

# 2021 çулччен тăснă

**РФ Патшалăх Думи «дача амнистине» 2021 çулччен тăсма йышăннă. Ку йышăнăва пленарлă ларура юлашки – виççĕмĕш вулавра тунă. Амнисти 2021 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен тăсăлать. Апла пулсан унччен граждансен хăйсен дача пурлăхне ансат мелпе харпăрлăха регистрацилеме май пулать.**

Çурт-йĕре ансат мелпе харпăрлăха регистрацилес тесен, çĕр участокĕн харпăрлăх докуменчĕ пур пулсан, техника планĕ кăна кирлĕ пулать. Регистраци органне кирлĕ документсене кирек кам та хăй тĕллĕнех çитерсе пама пултарать.

Саккунпа ытти тĕрлĕ ыйтăва татса парассине те йĕркене кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем кадастр ĕçĕсен чи пысăк хакне палăртма пултарассин нормине чикĕлемен. Ку норма граждансен хăйсен хушма хуçалăхĕ, сачĕ е пахчи валли, ку участокри харпăр хăйĕн гаражне е пурăнмалли уйрăм çуртне тума илнĕ çĕр участокĕсене пырса тивет.

Çавăн пекех сад тата пахча юлташлăхĕсен членĕсене пĕрлехи харпăрлăхри çĕр участокĕсене, вăл шутра пурте усă кураканнисене те, харпăрлăха тӳлевсĕр уйăрса парас йĕрке 2022 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен тăсăлать. Хальхи законодательствăпа вăл 2020 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче вĕçленмелле пулнă. Нумай хваттерлĕ çуртсем çывăхĕнчи çĕр участокĕсене йĕркелессишĕн (чикĕлеттерессиi, патшалăх кадастр учетне тăратасси) влаç органĕсем тӳрремĕнех яваплă пулса тăраççĕ.

**Чăваш Республикин Юстици тата пурлăх хутшăнăвĕсен министерствi.**

**Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав**

# Таса мар шыв пĕвене юхнине тупса палăртман

Редакцие **Муркаш ялĕнче пурăнакан çын** кĕчĕ. Вăл каласа панă тăрăх, Муркашри унченхи юсавпа техника предприятийĕн («Сельхозтехника» пĕрлешӳĕ) территорийĕнче хальхи вăхăтра уйрăм çынсен тĕрлĕрен предприятийĕ вырнаçнă. Вăл шутра кафе, автозаправка станцийĕ, автомойка т. ыт. те. Юлашки вăхăтра тата уйрăм çынсенчен кавирсем çуса тасатса пама йышăнассине те йĕркеленĕ. Кун пек çĕрте хими препарачĕсемпе усă курмасăр май килмест. Таса мар шыв вара пĕтĕмпех «Татнефть» автозаправка станцийĕ хыçĕнчи пĕвене юхать иккен. Малаххри вăхăтра çынсем пĕвери шывпа хăйсен участокĕсенчи ял хуçалăх культурисене шăварма усă курни пирки калать. Халĕ вара кунти шыв тасамарлăхпа витĕннĕ. Çавăнпа та шыва шăварма та усă курма май çук иккен. «Хамăрăн тăван тавралăха çавăн пек вараланине малашне те чăтса пурăнма тивет-ши?» – тесе ыйтать вăл.

Фактсене тĕрĕслесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма çырăва район прокуратурине ярса пама тиврĕ. Прокуратура çырури фактсене тĕрĕслеме ăна Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине ярса панă. Çак кунсенче **Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Н.Н. Косулинран** çакăн пек хурав илтĕм:

«Унччен «Сельхозтехника» пĕрлешӳĕ пулнă территорире вырнаçнă предприятисем хăйсен таса мар шывĕпе «Татнефть» автозаправка станцийĕ хыçĕнчи пĕвене варалани малашне курнакан çырăва тĕрĕсленĕ май, Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине çавна пĕлтерет.

Федерацин 2002 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчи 7-ФЗ номерлĕ «Об охране окружающей среды» Саккунĕн 3-мĕш статйине килĕшӳллĕн, предприяти-организацисен хăйсен хуçалăх тата ытти йышши ĕçне-хĕлне пурнăçланă чухне тавралăха варалама право çук. Çут çанталăк ресурсĕсене сыхласси, вĕсемпе перекетлĕ усă курасси тата лайăхлатса пырасси экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтермелле. Тавралăха сыхласси законодательствине пăснăшăн вара яваплăх пăхса хунă.

Асăннă саккунăн 51-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, производствăпа потреблени каяшне, вăл шутра радиоактивлă каяша та, çĕр çинчи тата çĕр айĕнчи шыв объекчĕсем çине, шыв пухăнмалли лаптăксене, тăпрана тата çĕр айне кăларса яма юрамасть.

Шыв кодексĕн 39-мĕш статйин 2-мĕш пайĕнче шыв усă куракансен шывпа усă куракан ытти çынсен прависене пăсмалла марри, çавăн пекех тавралăха сиен кӳмелле марри пирки каланă. Çавна май хăйсем усă куракан тасатмалли сооруженисене юсавлă тытма, асăннă Кодекспа тата федерацин ытти саккунĕпе пăхнă тивĕçсене пурнăçлама тивĕç.

Шыв кодексĕн 55-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн уйрăм çынсен, предприяти-организацисен шыв объекчĕсемпе усă курнă чухне шыв хуçалăх мероприятийĕсене тата шыв объекчĕсен сыхлав мероприятийĕсене пурнăçлас пулать.

Вулакан çырăвне пур енлĕ тата объективлă пăхса тухас тĕллевпе республика Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин специалисчĕсем Муркаш ял тăрăх администрацийĕн специалисчĕпе пĕрле унченхи «Сельхозтехника» пĕрлешӳĕн территорине пăхса тухнă.

Çавна тупса палăртма май килнĕ. Асăннă территорире 5 боксран тăракан автомобиль мойки пур. Çавăн пекех магазин, кафе тата санитари узелĕсем вырнаçнă. Кунсăр пуçне транспорт хатĕрĕсене топливăпа заправка тумалли автозаправка станцийĕ пур.

Автомобиль мойки хыçĕнче автотранспорт хатĕрĕсене çунă чухне юхакан таса мар шыв пухăнмалли отстойниксем пур. Унченхи «Сельхозтехника» пĕрлешӳĕн территорийĕнчен таса мар шыв тавралăха юхса вараланине, çавăн пекех «Татнефть» автозаправка станцийĕ хыçĕнчи шыв объектне (пĕвене) лекнине тупса палăртман».

**«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**Наци проекчĕ**

# Спорт пурнăç норми пулса тăмалла

**«Демографи» нацпроект шайĕнче федерацин тата регионти «Спорт – норма жизни» проектсене пурнăça кĕртме тытăнчĕç. Çавна май кăçал физкультурăпа спорт отраслĕнче темиçе енпе ĕçлесе пыраççĕ.**

Пĕрремĕшĕнчен, регион шайĕнчи хоккей центрне тума тытăнчĕç. Çак сооруженире хупланă пăр арени, куракансен трибунисем, хывăнса тăхăнмалли пӳлĕмсем тата хуçалăхпа администрацивлă пӳлĕмсем пулмалла. Ăна çитес çул туса пĕтерме планланă.

Çавăн пекех наци проекчĕпе пăхса хунă тăрăх, Чăваш Енри тăхăр муниципалитетра кăçалах ГТО нормативĕсене пурнăçлассине хатĕрленӳ ирттермелли урамри спорт площадкисене йĕркелесе хута яма палăртнă. Чăваш Ен Спорт министерствин сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, федераци проекчĕ ĕçненĕ вăхăтра пурĕ çакăн пек площадка Чăваш Енри 17 муниципалитет районĕнче пулмалла.

– Муркаш районĕнче хальхи вăхăтра ГТО нормативĕсене пурнăçлассипе тест центрĕ тесе «Сывлăх» спорт шкулне çирĕплетнĕ. Унта шкул ачисем те, тĕрлĕ организацире вăй хуракансем те ГТО нормативĕсене пурнăçлаççĕ. Ылтăн, кĕмĕл тата бронза значоксене тивĕçекенсем сахал мар. Кăçал пирĕн районти 453 çын нормативсене пурнăçларĕ, – палăртрĕ **район администрацийĕн физкультурăпа спорт секторĕн ертӳçи Игорь Гурьев.**

Вăл каланă тăрăх, «Спорт – норма жизни» проект ĕçленĕ тапхăрта пирĕн районта та ГТО нормативĕсене пурнăçлассипе хатĕрленӳ ирттермелли урамри спорт площадкине тума палăртнă. Çав площадкăна «Сывлăх» спорт шкулĕ çывăхĕнче йĕркелеме пăхса хунă. Унта ГТО нормативĕсене пурнăçлама пулăшакан тĕрлĕ спорт оборудованийĕ вырнаçтарĕç.

Çакă, паллах, çынсемшĕн меллĕ пулмалла. Çавăнпа та физкультурăпа районти тата ытларах çын туслашасса шанмалла кăна. Сăмах май, 2018 çулти пĕтĕмлетӳ тăрăх, пирĕн районта пурăнакансенчен 45 процент ытларах çын тăтăшах спорт тата физкультура занятийĕсене хутшăннине палăртнă. Массăллă ирткен спорт мероприятийĕсене ача сачĕсене çӳрекенсем те, спорт ветеранĕсем те активлă хутшăнаççĕ.

«Спорт – норма жизни» проект пирки калаçăва тăсса вара кăçал Чăваш Енри Олимп резервĕн пилĕк спорт шкулне специализациленĕ çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерме пăхса хунине палăртмалла. Çакă спортăн регионти база тĕсĕсемпе спорт резервне хатĕрлеме кирлĕ. Ку ĕçе пурнăçлама пурĕ 43 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă.

Проекта пурнăçланин тĕп тĕллевĕ – 2024 çул тĕлне тăтăшах спорт тата физкультура занятийĕсене хутшăнакан çынсен шутне пурăнакансен 55 процентне таран çитересси. Çавна май республикăра пур шайра та çынсене массăллă спорта активлăрах явăçтарма, вăл шутра ГТО нормативĕсене пурнăçлассине те ытларах хутшăнтарма тĕллев лартнă. Спорт резервне хатĕрлесси çине те пысăк тимлĕх уйăрĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Социаллă хӳтлĕх**

## Пĕчĕк тупăшлисем пулăшусăр юлмаççĕ

Пĕчĕк тупăшлă граждансем патшалăх пулăшăвĕсĕр юлмаççĕ. Кун пеккисене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме субсидипе тивĕçтерессине пăхса хунă. Субсидие граждансем пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме каякан расхутсем пĕтĕмĕшле тупăшăн 22 процентĕнчен ытларах пулнă чухне тивĕçеççĕ.

Субсидие уйăхсерен тӳлесе тăраççĕ. Тĕп условиi – гражданинăн пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессипе парăм пулмалла мар. Субсидие тивĕçме çемьен унченхи 6 уйăхри пĕтĕмĕшле тупăшĕ пирки калакан справкăна е пĕчĕк пурăнакан гражданинăн 6 уйăхри тупăшĕн справкине социаллă хӳтлĕх пайне илсе пымалла.

Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче социаллă хӳтлĕх пайĕ асăннă субсидипе районти 259 çемьене пĕтĕмĕшле 1 млн та 605,84 пин тенкĕлĕх тивĕçтернĕ.

## Ял специалисчĕсем компенсаците тивĕçнĕ

Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн ялта ĕçлесе пурăнса пенсие тухнă уйрăм категори çыннисене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме, вăл шутра нумай хваттерлĕ çуртри пĕрлехи пурлăха капиталлă юсама взнос тӳлеме кайнă расхутсене саплаштарас тĕллевпе социаллă пулăшу мелĕпе тивĕçтерме пăхнă. Кун пеккисене уйăхсерен тивĕçтерекен компенсаци виçи 1055 тенкĕпе танлашать. Çынсем компенсаци социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă илсе тăраççĕ. Июнь уйăхĕнче асăннă компенсаципе пенсие тухнă 180 ял специалистне тивĕçтернĕ. Уйăрнă пĕтĕмĕшле сумма 199,9 пин тенкĕпе танлашать.

## Федераци çăмăллăхĕпе усă куракансем – 1753-ĕн

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме кайнă расхутсене федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансенне 50 процент шучĕпе саплаштарма пăхнă. Районĕпе кун пек 1753 çынна уйăхсерен укçа компенсацийĕ тӳлесе тăраççĕ. Çын хăйĕн пĕр пурăнмалли çурт-йĕрĕшĕн кăна компенсаципе тивĕçейрет.

Июлĕн 26-мĕшĕ тĕлне районĕпе федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансене тата вĕсен çемйисене компенсаципе тивĕçтерме пĕтĕмпе 4 млн та 208 пин тенкĕ уйăрнă.

**Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн материалĕсем тăрăх В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Вырма – 2019

# Агрегатсем – кĕрхи тулă пуссинче



(Вĕçĕ. Пуçл.1-мĕш стр).

250 лаша вăйлĕ «ACROS 530» комбайн штурвалĕ умĕнче – маттур йĕкĕт Владимир Шапошников. Унăн пулăшаканĕ Сергей Ишаков та – техникăна лайăх пĕлекен ăста специалист. Хăйсен «хир карапне» вĕсем ĕç çине тĕплĕ хатĕрленĕ. Техника шанчăклă ĕçлет.

«Дон 1500» комбайнпа вара хуçалăхăн тĕп инженерĕ Александр Ишаков тăрăшать. Ĕç çи вăхăтĕнче инженер пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ комбайн штурвалĕ умне ларать. Явапллă тапхăрта çĕр ĕçченĕшĕн мĕн акса-лартса ӳстернине вăхăтра та çухатусемсĕр пухса кĕртессинчен пĕлтерĕшлĕрех задача пулма пултараймасть тесе шухăшлать. Вăл хăйĕн пулăшаканĕпе Александр Яруткова тăрăшать. Вĕсен вырма агрегачĕ те пĕрремĕш кунран тытăнсах тухăçлă ĕçлет.

Хиртен вырма агрегачĕсем патĕнчен тырă йĕтем çине турттарма Валерий Александровпа Вячеслав Шапошникова шаннă. Ĕç çи ăнăçлăхĕ вĕсенчен те килет. Улăмне те çийĕнчех пресласа рулонсене хывассине йĕркеленĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисем валли хĕл каça вăл та сахалах мар кирлĕ.

Хуçалăхăн ĕç çи калăпăшĕ кăçал пĕчĕк темелле мар. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпе 948 гектар çинче акса ӳстернĕ. Вăл шутран кĕрхи тулă – 366 гектар. Çурхи культурăсен лаптăкĕсем те самай: тулă – 293 гектар, урпа – 202 гектар, пăрçа йышши культурăсем – 87 гектар. Уяр кунпа усă курса вĕсене пĕтĕмпех вăхăтра тата çухатусемсĕр пухса кĕртес пулать. Çакна ăша хывса тăрăшаççĕ «Свобода» хуçалăхра паян.

Сăмах май, Суворов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та çак кунсенче вырма ĕçĕсем пуçланнă. Ытти хуçалăх та явапллă ĕçе кӳлĕнме хатĕрленет.

**В. ШАПОШНИКОВ.**



**Сăн ӳкерчĕксенче: Леонид Майоров улăм пресланă çĕрте тăрăшуллă; пĕрремĕш тырă йĕтем çине ăсатăнать.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Редакци почтинчен

## Çамрăклăх куç умĕнчех

Ку ĕç-пуç 1956 çулта пулса иртрĕ. Вăрçă хыççăн тыр-пул тухăçĕ питех те начар пирки пичче, эпĕ тата Тамара Скворцова, аякри тăрăха ĕçлеме кайма шухăшларăмăр. Март уйăхĕн çурринче урасене каптăр çăпата сыртăмăр та çула тухрăмăр.

Поезд чарăнăвĕнче Куйбышев хулине антăмăр. Виçĕ портлă машинăпа симĕс тум тăхăннă салтаксем каяççĕ, пире курчĕç те: «чуваши, лапти-лапти!», – тесе кăшкăраççĕ. Эпир тĕлĕнсе: «Эх, çав чăвашсене такам та паллать-çке», – тетпĕр.

Унтан каллех поезд çине ларса малалла кайрăмăр, Сталинграда çитрĕмĕр. Унта вара шăтăк-çурăк çуртсем вăрçă пулса иртнине пĕлтереççĕ. Ĕç шыраса Дон шывĕ урлă каçрăмăр. Пĕр яла вара никам та тĕкĕнмен, мĕншĕн тесе унта нимĕçсен штабĕ пулнă. Вăл яла Герасимовка тетчĕç. Унта та чăвашсем ĕçе вырнаçнă.

Пире валли те ĕç тупăнчĕ. Пурăнма пĕр кинемей патне вырнаçтарчĕç. Питĕ пӳртçурт çук, çатан авса тăм çапса тунă пӳртсенче пурăннă ун чухне. Хутса ăшăтма вутă çук, сурăх тислĕкне пуртăпа тăваткал касса вутă хутма хĕвел питтинче типĕтмеллечĕ, çавăнпа кăмака хутмаллаччĕ. Ирпе çывăрса тăнă çĕре ура вĕçне той çĕленсем пырса выртатчĕç, кил хуçи пире: «Ан хăрăр, сăхмаççĕ вĕсем», – тетчĕ.

Ирпе сурăхсемпе уя тухаттăмăрччĕ те унта виç утăмра пĕрре çыннăн пуç шăмми выртнине кураттăмăрччĕ. Унтах нимĕçсен каскисем выртатчĕç, вăрçă вăхăтĕнчи техника ларатчĕ, пуçтарса пĕтермен танк, бомба тата ытти те пурччĕ. Çапла вара март уйăхĕнче кайса октябрь вĕçĕнче киле тырăпа çитрĕмĕр.

1957 çулхи кĕркунне хамăр ял каччипе Михаил Ошмановпа çемье çавăртăмăр. Виçĕ ывăл пăхса çитĕнтертĕмĕр. Асли çар ĕçĕпе ĕçлесе пенси çине тухрĕ, кĕçĕнни – Мускавра, вăталăххипе ялта пĕрле пурăнатпăр. Пурин те ачасемпе мăнуксем пур, кашниех çемьеллĕ.

**З. ОШМАНОВА.**
**Хорнуй ялĕ.**

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

## Кролика та вакцинаци тума манар мар

**Редакцие çакăн пек ыйту килчĕ: «Чылай çул хушма хуçалăхра кроликсем ĕрчететĕп. Кăçал вара темĕнле чире пула пулĕ вĕсем йышлăн вилчĕç. Тен ман ыйту кролик усракан ытти çынна та хумхантарать. Хаçат урлă пĕлес килет».**

Ку ыйтупа **выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕн çумне Людмила Бояриновăна** паллаштартăмăр. Вăл палăртнă тăрăх, чĕр чуна çывăхран тата касса пăхмасăр сăмах вĕççĕн кăна вăл е ку диагноза çирĕплетме йывăр. Кроликăн та тĕрлĕ чир-чĕр пулма тата хăшĕ-пĕри вĕлерме те пултарать.

Тĕслĕхрен, вируслă геммораги чирĕ (ВГБК) хăрушă чир шутланать, вăл кроликăн ӳсĕмне пăхмасăр унăн мĕнпур организмне хавшатать тата вĕлерет. Чĕр чуна хăрушă вирусран упраса хăварас пулсан, чир паллисене лайăх пĕлмелле, маларахранах сыхлăх ĕçĕсене тумалла.

Мĕнле мелпе ерет-ха çак чир? Кроликăн çак чирне пуçараканни кальцивирус йышĕнчи РНК вирус шутланать, сиенлетес шай питех те пысăк. Чир пуçаруçи пилĕк çул таран сыхланса юлма пултарать, хлоркăпа сиенсĕрлетнине те, шăнтнине те хирĕç çирĕп тăрать.

Вируслă геммораги чирĕ кроликсемшĕн кăна характерлă, ытти чĕр чуншăн, çыншăн хăрушлăх кăларса тăратмасть. Вирус ытларах чухне чирлĕ тата чирлесе иртнерĕ кролик урлă сарăлать, вĕсене пăхакан çын çумне çыпăçса ытти кролика ерме пултарать. Инфекци çавăн пекех апат, çĕр, шыв, тислĕк, ай сарăм, тĕрлĕ инструмент, тум урлă сывă чĕр чун патне куçать.

Асăннă чирĕн çивĕч тата питĕ çивĕч формисем пуррине палăртмалла. Вĕсен кашнин – хăйĕн паллипе сиплев мелĕ. Çивĕч форма пулсан, чĕр чунăн ӳт температури пысăк, вăл вăйсăр курăнать, апат патне пымасть, сывлав çулĕсем сиенленеççĕ, пӳлĕнеççĕ, пыршăлăх ĕçĕ пăсăлать, каяшĕ çемçелет.

Çапах та кролика ытларах чухне питĕ çивĕч формăллă чир ернине палăртмалла. Ăна малтанах сисме те йывăр, инкубаци тапхăрĕ темиçе сехетрен пуçласа талăк таран пулать. Çавăн пекех çак формăллă чирĕн палли те курăнмасть. Кролик малтанхи пекех çиет, ӳт температури те норма шайĕнче. Анчах та чирлĕ чĕр чун инкубаци тапхăрĕ вĕçленнĕ тĕле урисемпе темиçе хутчен туртăнса илет те вилсе каять.

Çакна та манмалла мар, чир пуçланнă вăхăтран кролик организмĕнче улшăнусем пулса иртеççĕ. Кролик ĕрчетекен вара çакна асăрхамасан та пултарать. Енчен те хушма хуçалăхра сиплевпе сыхлăх ĕçĕсене вăхăтра пуçламасан, ытти кролик та вилсе пĕтес хăрушлăх пур.

ВГБК чирĕ хăвăрт аталанма тытăнать, каярах вирус пуçаруçи юн çаврăнăшне лекет, лимфа çыхăнăвĕ таврашне çавăрса илет, чĕр чун юнлă хăсма пуçлать тата ытти те. Çакă пĕр кроликран мĕнпур йыша çăмăллăнах ерет. Паллах, çӳлерех асăннă чир ернине чĕр чуна касса пăхсан кăна тĕрĕс çирĕплетме пулать.

Чирлĕ кролик аш-пăшне çиме тата унпа сутă тума, ăна ытти хуçалăхри кроликпа пĕтĕлентерме, çавăн пекех читлĕхрен кăларса яма юрамасть, вĕсене пăхнă çĕрти мĕнпур инвентарь хăйĕн вырăнĕнче юлмалла, чирлĕ кролик тăнă çĕрти тислĕке удобрени тĕлĕшпе усă курмалла мар. Чирлĕ кроликпа çыхăннă мĕнпур япалана, вырăна дезинфекцилемелле. Вилнĕ чĕр чуна çĕр айне чавса пытармалла мар, унсăрăн чир-чĕр малалла та сарăлма пултарать, вĕсене чĕртсе çунтармалла. Çӳлерех асăннă ĕçсене вăхăтра пурнăçласан кролик йышлă вилессинчен хăтăлма май пулĕ.

Вĕсен тыткаларăшĕ иккĕленӳллĕ пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ĕçченĕсене пĕлтермелле. Ку чире тĕпрен сиплесе пĕтерме çук, çавăнпа та эпидеми пуçланиччен маларах вакцинаци туни кăна кроликсене хăрушă чиртен сыхланма май парĕ, вирус аталанассинчен хăтарĕ. Ку енĕпе районти ветеринари ĕçченĕсем пулăшма яланах хатĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ял тăрăхĕсенче

## Мăн Токшикра – ял уявĕ

**Утă уйăхĕн çирĕммĕшĕнче Турай ял тăрăхне кĕрекен Мăн Токшик ял халăхĕ кӳршĕсене, тăвансене, чыслă хăнасене вуннăмĕш хут ял уявне пуçтарчĕ. Уява пуçтарăннă ял халăхне ял уявне пуçлама ватăсем пил пачĕç. Хăнасене çăкăр-тăварпа тата чăваш сăрипе кĕтсе илчĕç.**

Уява ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е. Орлов уçрĕ. Вăл ял уявне йĕркелесеирттерме пулăшакансене паллă туса хăварчĕ, тав сăмахĕ каларĕ. Салам сăмахĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Матросов та тухса калаçрĕ, çакнашкал уявсем ăрупа ăрăва çыхăнтарнине, йăла-йĕрке ламран лама куçса пынине палăртрĕ. "Кашни ялăн хăйĕн уйрăмлăхĕ. Мăнтокшиксем вара туслă, ĕçчен, пултаруллă пулнипе палăрса тăраççĕ", – терĕ вăл. Çывăх вăхăтра кунта ялти çула тума палăртнине пĕлтерчĕ. Ял хастарĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене парса хавхалантарчĕ.

Çавăн пекех пухăннисене Н. Павлов предприниматель тата ытти çын та саламларĕ. Çакăн пек уявсем ял çыннисен пуянлăхне, вĕсен çирĕплĕхĕпе хастарлăхне, туслăхпа тăванлăхне палăртни çинчен каларĕç. Уява йĕркелес ĕçре ял старостин Г. Никитинăн тӳпи пысăк. Çакна чылайăшĕ палăртрĕ. Хăй вара вăл ял пурнăçĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен каласа пачĕ, пурне те уявпа саламларĕ.

Ял уявĕн программи пуян та анлă пулчĕ. Волейболла выляссине, пăшалтан тĕл пересси не, скакалкăпа сикессине, обруч çавăрассине, калуш ывăтассине, турник çинче туртăнассине, кире пуканĕ йăтассине те йĕркеленĕ. Чи маттуррисене парнесем парса хавхалантарчĕç.

Ялти чи ватă çынсемпе чи кĕçĕннисене те парне парса чыс турĕç. Пĕчĕк пепкесене ашшĕ-амăшĕ пекех тăрăшуллă та маттур ӳсме вăй-хал сунчĕç. Çак кун "ылтăн" туй паллă тăвакан çемьене, Светлана Ниловнăпа Валерий Филиппович Ивановсене, саламласа парне пачĕç. Мăн Токшик ял çыннисем ялти ветеринар А. Яхеева ĕçĕпе те питĕ кăмăллă.

Уяв, паллах, юрă-ташăпа илемлĕ. Турай ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсем, Мăн Токшикри Культура çурчĕ çумĕнчи «Тăванлăх» халăх фольклор ушкăнĕ ял çыннисене юрă-ташăпа савăк кăмăл парнелерĕç. Çурлатринчи «Çеçпĕл» эстрада ушкăнĕ кăмăла каймалла хаваслă такмаксемпе, çепĕç юрăсемпе савăнтарчĕ, тĕрлĕ ташăпа тыткăнларĕ.

Урамра ялта пурăнакансен сăн ӳкерчĕкĕсен куравĕпе паллашма май пулчĕ. Лапамра ал ĕçĕсен куравне йĕркелерĕç.

**Ю. ЕВСТАФЬЕВА.**

Усăллă канаш

## Тĕрĕс çумалла

**Çулла мĕн тĕрлĕ кăна улма-çырла, пахча çимĕç ӳсмест пулĕ. Вĕсем усăллă та хăрушлăхсăр пулччăр тесен вĕсене тĕрĕс çума пĕлмелле. Çимĕç çинчи тăпрапа химиката кăна çиелтен çуса ямалла мар, тĕрлĕ микроба та пĕтерме тăрăшмалла. Чи малтанах алăсене супăньпе çумалла, хыççăн – çимĕçе. Шывĕ, паллах, таса пулмалла.**

Хăшĕ-пĕри апельсин, мандарин, грейпфрут йышши çимĕçсене çумасан та тесе шухăшлать. Ку тĕрĕс мар, алă тата çĕçĕ урлă тĕрлĕ микроб пурпĕрех çынна лекме пултарать. Çимĕçе çутă та илемлĕ сăн кĕртме воск йышши япалапа сĕрнине те шута илмелле. Пан улми, баклажан йышши çимĕçе супăньпе щеткăпа çуни тата хыççăн тăрă шывпа чӳхени те ытлашши мар. Çырла таврашне 5 минут хушши душра тытсан лайăх. Ешĕл çимĕçе вара 10 – 15 минутлăх шыва ярса лартмалла, çапла майпа çулçă çинчи тăпра шыва куçать, хыççăн юхакан шыв айĕнче чӳхемелле. Тымар çимĕçе малтан шыва ярса лартмалла.

**Е. ЕГОРОВА,**
**Чăваш Республикинчи гигиенăпа эпидемиологи центрĕн пĕтĕмĕшле гигиена врачĕ.**

## РАБОТА / ĔÇ

**КАФЕ "УЮТ"** (д. Калайкасы) принимает заказы на проведение любых торжеств. Недорого. Также требуется повар, официант. Ежедневная зарплата. ИП Атнекеева. Тел. 8-960-303-38-95, Светлана. 2-2.

* * *

На постоянную работу требуются рабочие строительных профессий: монолитчики, плотники, каменщики, фасадчики. Тел. 8-937-397-08-71. 3-10.

Требуются мужчины в сферу строительства. Тел. 8-967-795-88-69. 2-5.

Требуются физически крепкие водители-экспедиторы для работы в г. Чебоксары по вахте. Жилье предоставляется. Оплата достойная. Тел. 21-79-95, 8-952-024-85-44.

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является:

Петрова Алевтина Ивановна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, д. Ярославка, ул. Центральная, д. 1, кв. 7.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68, от 28.04.2011г., СНИЛС №110-257-732 10, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 14148, состоящего в некоммерческой саморегулируемой организации Ассоциация «Гильдия Кадастровых Инженеров» №802/10-16 от 13.10.2016г., Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел. 63-4-39, E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, дом 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу:

1) Чувашская Республика - Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина дом 41/5 в ООО «Аршин»;

2) Чувашская Республика – Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д.37 в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике;

3) Чувашская Республика – Чувашия, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 56 в Управление Росреестра по Чувашской Республике.

**КРОВЛЯ**
**ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
Работаем быстро, качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам.
Цены ниже, чем на рынке.
КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы.
Тел.: 8-905-342-00-70. 9-10.

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ** и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 7-10.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА REHAU**
от 2900 руб./кв.м
ДВЕРИ (межкомнатные, металлические)
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ГАРАЖНЫЕ ВОРОТА
ЗАМЕР, ДОСТАВКА, УСТАНОВКА.
Пенсионерам – скидки!
Тел. 8-927-844-78-11. 6-10.

Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр. Тел. 8-937-015-35-40. 5-10.

**ЭЛЕКТРОПАСТУХ**
для частных и коллективных хозяйств на любую площадь
Тел. 8-961-347-21-40.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ, ОКНА, ДВЕРИ.**
Тел. 8-961-346-56-76. 1-10.

## Объявления

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтовые доски, вагонка; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 2-20.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел. 8-927-667-40-92.** 6-46.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 4-10.

АУ Чувашской Республики ДПО Учебный Центр «Нива» Минсельхоза Чувашии в с. Моргауши объявляет новый набор на курсы подготовки
**ВОДИТЕЛЕЙ КАТЕГОРИИ «В», ТРАКТОРИСТОВ – МАШИНИСТОВ.**
Новые формы, гибкий график обучения.
Тел. 8-905-345-35-77. 1-2.

**Продаю: Песок. Гравмассу. Навоз. Чернозем. Грунт. Гравий. Щебень. Бой кирпича.** Доставка до 15 тонн. Недорого. Тел. 8-905-198-63-88. 10-11.

* * *

**Песок, гравмасса (ОПГС), щебень (известковый, гранитный).** Недорого. Доставка. Тел. 8-987-667-42-51. 10-10.

* * *

**Все виды строительных работ.** Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-865-60-00, 8-987-670-56-78. 1-10.

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля** любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-992-32-42. 1-10.

* * *

**Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка.** Доставка. Тел. 8-917-675-35-75. 6-6.

* * *

**ЗАБОРЫ** ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 6-15.

* * *

**Услуги мини-экскаватора**, ширина ковша: 30 см, 35 см, 45 см, 55 см. Глубина копания 3 метра. Час работы мини-экскаватора 1000 руб. плюс доставка. Прокладка труб под асфальт методом прокола до 10 м. Бурение скважин на воду, цена 1600 руб. за 1 метр. Работаем за наличный и безналичный расчет. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 3-3.

* * *

**ФУНДАМЕНТ, КИРПИЧНАЯ КЛАДКА, КРОВЛЯ** любой сложности. Проект, смета. Продаем бетон М-200, кирпич, профнастил, металлочерепицу со скидкой. ЗАБОРЫ, СЕТКА сварная и т.д. Тел. 8-937-397-08-71. 4-10.

* * *

**ПЕСОК РЕЧНОЙ, КАРЬЕРНЫЙ, ГРАВМАССА, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ГРУНТ** и т.д. Доставка по Моргаушскому району. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 1-10.

* * *

Продаю: **песок, бой кирпича, гравмассу, щебень, торф.** Доставка. 8-996-949-09-54. 2-18.

* * *

**Выполним все виды строительных работ**. Пенсионерам – скидки. Тел. 8-996-854-79-34. 2-5.

* * *

Бройлер, хур, кăвакал, мулард, кăркка чĕпписене сутатпăр. Нумай илекенсене леçсех паратпăр. Тел. 8-937-395-16-03, 8-906-130-82-51. 5-10.

* * *

Продаю 3-хкомн. квартиру в с. Юськасы, ул. Совхозная, д. 1. Тел. 8-903-063-34-00. 4-5.

Реализуем: агрегат по изготовлению керамзитобетонных блоков (стационар, вибратор, трансформатор 2-хблочный); формы для изготовления ж/б колец и крышек (0,7; 0,8; 1,0; 1,2; 1,5); бетономешалку 0,5 м$^3$, 3-хфазный; автокран электрический (6 м, стрела); автомашину ГАЗ-52 (бортовая); экструдер ЭК-15 (новый, в комплекте); емкости (10.15 м3), сталь толщиной 5 мм; мельницу для фуражной муки. Тел. 8-919-654-93-81.

* * *

Продаю 2-хкомн. квартиру в центре г. Чебоксары. 1 500 000 руб. Торг. Рассматриваю обмен. Помогу с ипотекой. Тел. 89276675764.

* * *

Продаю однокомн. квартиру с евроремонтом в самом центре г. Чебоксары. Рассматриваю обмен на авто или квартиру в Чебоксарах в разные стороны доплаты. Помогу с ипотекой. Тел. 89276675764.

* * *

Продается комната пл. 17 кв.м в г. Чебоксары по ул. Сапожникова, д. 17. Цена – 350 000 руб. Также рассматриваем сертификаты. Помогу с ипотекой. Тел. 89003339793.

* * *

Продается 3-хкомн. квартира с ремонтом в г. Чебоксары, ул. Университетская. Помогу с ипотекой. Цена – 2 800 000 руб. Тел. 89003339793.

* * *

Продается однокомн. квартира пл. 45 кв.м. с евроремонтом, инд. отоплением в с. Моргауши, ул. Парковая, д. 4. Помогу с ипотекой. Цена – 1 650 000 руб. Тел. 89276675764.

Продается 3-хкомн. квартира пл. 88 кв.м. с инд. отоплением, евроремонтом и мебелью в с. Моргауши, ул. Парковая, д. 7. Помогу с ипотекой. Цена – 3 200 000 руб. Тел. 89276675764, 89003339793.

* * *

Закупаем металлолом: холодильники, плиты, котлы, листы, жестянку, любой хлам, автомобили (легковые, грузовые). Делаем справку об утилизации. Тел. 8-903-359-95-54, 8-927-844-81-14.

* * *

Кăçалхи тулă сутатпăр. Тел. 8-937-958-51-14. 2-3.

* * *

Продаю сено в рулонах. Тел. 8-927-998-18-88. 2-2.

* * *

Продаются вьетнамские вислобрюхие черные поросята. Тел. 8-952-020-56-15.

* * *

5 уйăхри зааненски ăратлă качака путеккисене тата сумалли качака сутатăп. Тел. 8-987-673-14-80.

Продаю однокомнатную квартиру пл. 47 кв.м. в с. Моргауши по ул. Парковая, д. 8, с мебелью, балкон застеклен. Тел. 8-903-066-96-69.

* * *

Продаю дом, в доме газ, вода, канализация, огород 60 соток, плодоносящий сад; 2 швейные машины; мотоцикл "Юпитер-3" с коляской. Недорого. Тел. 8(83541) 63-0-52.

* * *

Продаю дойных коз и козлят. Тел. 8-987-122-81-31.

## КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП

Куплю КОРОВ на мясо; БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг; ТЕЛОК. Тел. 8-937-951-19-03. 24-33.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-905-197-61-66. 9-10.

* * *

ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ИЛЕТПĔР. Тел. 8-905-341-69-25. 5-10.

КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 5-5.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 5-5.

* * *

Куплю: КОРОВ, бычков, телок от 1 месяца, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Дорого. Тел. 8-961-345-77-89. 24-33.

* * *

КУПЛЮ: бычков от 1 месяца до 600 кг, коров старых и молодых на мясо, больной скот. Дорого. Тел. 8-937-379-90-01. 4-13.

* * *

КУПЛЮ коров, телок, бычков. Тел. 8-905-344-06-84. 2-5.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ А.П. Ишаков аслă инженерăн ашшĕ
**Петр Семенович ИШАКОВ**
ĕç ветеранĕ, пенсионер йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Виталий Филиппович БАРАНОВ**
ĕç ветеранĕ, пенсионер йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +9 | +14 | +11 | +9 | +7 | +10 | +15 | +12 | +10 | +12 | +15 | +13 | +9 | +13 | +16 | +13 |
| Ощущается | +7 | | | | +4 | +7 | | | +8 | | | | +7 | | | |
| Давление | 734 | 733 | 732 | 732 | 731 | 733 | 735 | 735 | 734 | 734 | 734 | 735 | 734 | 735 | 735 | 736 |
| Ветер | 4 | 6 | 3 | 1 | 4 | 7 | 5 | 4 | 4 | 5 | 7 | 4 | 4 | 5 | 6 | 4 |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учреждениĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Н.Н. Николаева.
Пичете панă 30.07.2019 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4258.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.